

# Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – çемйипе

2024 Çемье çулталăкĕ

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Ирина Яковлева

## Донбасран – Пăртаса

**Анăçри Украинăн фашистла неонацисчĕсем НАТО хĕтĕртнипе пуçĕсене çĕкленĕ пирки пулса иртекен инкеклĕ пăтăрмахсем пĕтĕм Украинăри çынсен, çемйисен шăпине улăштарчĕç, уйрăмах Днепртан тухăçра вырнаçнă, лăпкă пурăннă регионсенче. Вĕсенчен пĕри – Донецк облаçĕнчи килхуçалăхне пăрахса 2015 çултанпа Пăртасра тĕпленнĕ Владимир Викторович Барановăн çемйи.**



С. ЧИКМЯКОВА сăнӳкерчĕкĕ.

Барановсем.

Вĕсем мăшăрĕпе иккĕшĕ те 1974 çулта Донецкран 55 çухрăм анăçалла вырнаçнă Константиновка хулинче çуралнă, пĕр урамрах ӳснĕ. Çитĕнсе çитсен çамрăк хĕр Наташа Донецкра портной профессине вĕреннĕ, Володя Константиновкăри металлурги комбинатĕнче пăхăр шăратакан пулса ĕçленĕ. Каярахпа вĕсем унтах мăшăрланнă, кил-çурт çавăрнă, пурнăçне мĕн ватăличчен Володьăн çамрăк мар амăшне пăхса çав хуларах ирттерме ĕмĕтленнĕ. Çемьере Никита ывăлĕ ӳснĕ.

Анчах та 2014 çулта Украинăри нумай халăхăн пурнăçĕ улшăннă. Луганск, Донецк, Запорожье, Херсон облаçĕсенчи çынсем референдум ирттерсе Киева пăхăнмасăр пурăнма йышăннăран пуçĕсене çĕнĕрен çĕкленĕ неонацистсем ку вырăнсене танксемпе сĕмсĕррĕн пырса кĕнĕ, унти халăха хĕсĕрлеме кăна мар, хăйсем пек шухăшлаттарма пăхнă, вырăсла калаçма пăрахма хушнă. Çав çулах нацистсем Крым çурутравне те çавăрса илме хăтланнă, анчах пурте вĕсен пуçарăвне кар тăрса хирĕç пулнăран, кунта ĕç тухман, Крым Раççейпе пĕрлешрĕ. Тăватă облаçри пусмăр танатине лекнĕ вырăс чĕлхиллĕ халăх та референдум ирттерсе Раççейпе пĕрлешрĕ.

Акă мĕн аса илет Наталья Анатольевна Донецк облаçĕнче 2014 çулта пуçланнă событисем çинчен:

– Пирĕн килтен 150 метрта Часов Яр çулĕ çинчи телевышкăран инçех мар ополченецсен блок-посчĕ тăратчĕ. Эпир, çав урамра пурăнакансем, салтаксем патне час-часах вĕри апатпа каяттăмăр, вĕсен йывăр шăпине кăшт та пулин çăмăллатма тăрăшаттăмăр. Пĕр ирхине, 2014 çулхи çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче, Часов Яр енчен икĕ вертолет вĕçсе килчĕç те нацистсен десанчĕ анма пуçларĕ. Пĕрин çинчи десанчĕ анма пултарчĕ, анчах тепĕр вертолечĕн каялла тарма тиврĕ. Çапăçу пуçланчĕ. Эпир те малтанласа интересленсе пăхса тăтăмăр пулсан, хăрушлăх ӳссех пынине кура нӳхрепсене тарса пытантăмăр.

Вăрçă тапхăрĕнче те туйсем çав-çавах иртетчĕç. Константиновка-Журавка çулĕ çинче çамрăк мăшăрсен юратнă вырăнĕ пур, унта туй кортежĕ пырса сувенирсемпе лентăсем çакасси йăлана кĕнĕччĕ. Шăп çав кун ку вырăна кайма тухнă мăшăрăн кортежĕ кăшт кăна вутлă çулăм айне лекмен. Ушкăнра манăн шăллăм Сергей та руль умĕнче пулнă.

Вăл та Володя пекех пăхăр шăратакан специалист тата цех пуçлăхĕн заместителĕччĕ. Анчах вăрçа пула металлурги комбиначĕ хупăнчĕ, нумай рабочи, çав шутра манăн мăшăр Володя тата шăллăм Сергей та, ĕççĕр тăрса юлчĕç. Вĕсем çинчен интернет урлă Чăваш енри Вăрнарти кабель заводĕн ертӳçи пĕлнĕ, ăста специалистсем питĕ кирлĕ пулнине кура хăй патне чĕнсе илчĕ. Çапла мăшăр Сергей тата Никита 2015 çул пуçламăшĕнче Вăрнара çул тытрĕç. Хыççăнах, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче, Харьков урлă эпĕ те Белгород хулине кайма тухрăм, унта мана мăшăр кĕтме пулнăччĕ. Ватă анне пĕрле пыма килĕшмерĕ. «Кайса вырнаçăр, вара, тен, çитĕп», – терĕ. Изюм хулинче пирĕн 5 пассажиртан тăракан автобуса неонацистсен блокпостĕнче чарчĕç. Çавăн чухне, манăн Раççей паспорчĕ кăна пулнăран, вилĕм тепĕр хут хăйĕн сивĕ аллипе сĕртĕнсе иртрĕ. Украина салтакĕ: «Санăн мĕншĕн Украина паспорчĕ çук, ăçта хутăн?» – тесе вĕлерессипе хăратма пуçларĕ. Каярахпа кăмăлĕ çемçелчĕ, 500 гривна сĕнсен çураçрĕ.

Чикĕ урлă каçса мăшăрпа тĕл пулнă хыççăн тин хаштах сывласа ятăм. Чăваш енри Вăрнара та чиперех çитрĕмĕр, пурăнма завод Пăртасра хӳхĕм çурт илме пулăшрĕ. Пурнăç каллех хăй еккипе кайрĕ. 2018 çулта Никитăна Пăртасранах салтака ăсатрăмăр. Çартан таврăнсан ашшĕ тăрăшакан заводах ĕçе кĕчĕ, каярахпа предприяти ăна хăй шучĕпе куçăмсăр майпа Чăваш патшалăх университетне вĕренме те ячĕ. Паянхи кун вăл пахалăх управленийĕн тата социаллă технологисен факультечĕн 4-мĕш курсĕнче пĕлӳ пухать. Çав вăхăтрах заводрах ĕçлет. Сергей та кунтах, иккĕшĕ те – пăхăр шăратакансем. Володьăн инфаркта пула цехри çăмăл мар ĕçе хăварма тиврĕ. Аннене те илсе килес тетпĕр, анчах Константиновка неонацистсен аллинче пирки пирĕн тăван хулана Раççей çарĕсем ирĕке кăлармасăр ку ĕмĕте хальлĕхе пурнăçлама май çук.

Çакăн пек калаçу пулчĕ Владимир Барановăн мăшăрĕпе Наталья Анатольевнапа.

Донбасран куçса килнĕ Барановсен çемйи çинчен «Çĕнтерӳ çулĕн» пĕлтĕрхи юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 77-мĕш номерĕнчи «Ял илемĕ унта çамрăксем тĕпленнинчен килет» статьяра та асăннăччĕ. Чăнах та, Пăртасра тĕпленнĕ çĕнĕ çемье кӳршĕсемпе хапăл, кăмăллă, ĕçрен хăраман çынсем вĕсем. Ялта кĕске вăхăтрах тивĕçлĕ авторитет çĕнсе илчĕç. Вĕсен кил таврашĕнчи çĕнетнĕ хуралтисем куçа илĕртеççĕ. Анкартинчи унччен пушă выртнă çĕр çинче ĕне выльăх нумай пуç вырнаçмалăх вите лартса хăйне май пĕчĕк ферма туса хучĕç. Паянхи куна мăйракаллă шултра ĕне выльăх шутне 11 пуça çитерчĕç. Патшалăхпа килĕшӳ туса кашни кун 100 литр таран сĕт сутаççĕ. Пĕтĕм ял хуçалăх ĕçĕсене Барановсем мăшăрĕпе никама тара тытмасăр иккĕшех туса пыраççĕ.

«Ко двору пришелся» теççĕ ун пек чух вырăссем. Барановсен çемйи пирки те çавнах каламалла. Пултаруллă, тараватлă, ĕçпе ырă тĕслĕх кăтартакан çынсем килсе вырнаçрĕç Донбасран Пăртаса. Сăмах май, кăçал вĕсен иккĕшĕн те 50 çулхи юбилей çитет: Владимир Викторовичăн раштавăн 27-мĕшĕнче, Наталья Анатольевнан – çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче. Барановсен паянхи тĕп ĕмĕчĕ – юбилей тĕлне тăван Константиновка хулине Раççей çарĕсем нацистсенчен ирĕке кăларасси, хальлĕхе оккупацинче пурăнакан амăшĕпе пĕрле пуласси. Çакă вара вĕсемшĕн чи хаклă парне пулĕччĕ.

**Геннадий ИВАНОВ**

Пăртас

## Пирĕн туслă çемье

**Кăçал Раççейре Çемье çулталăкĕ. Çемье вăл – патшалăхăн çирĕп никĕсĕ, чи хаклă пуянлăх. Çемьепе пурнăç ырăрах тата тулăхрах. Туслă та çирĕп çемьере кирек епле йывăрлăха та çăмăллăнах тӳссе ирттерме пулать. Килĕшӳпе çураçу, ăшпиллĕх хуçаланасси чи малтанах мăшăрсенчен килет. Акă, тĕслĕхрен, Вăрнарти Ольгăпа Дмитрий Косаревсем çемье хаклăхĕсене упраççĕ, кашни ачи çĕршывăн чăн-чăн гражданĕсем пулса çитĕнччĕр тесе тăрăшаççĕ. Вĕсен ывăлĕ Константин хаçат вулаканĕсене хăйĕн çемйи пирки çырнă статйипе паллаштарать.**



Телей тени мĕн тени? Атте-анне, пичче, аппа, шăллăм пурри, вĕсем çирĕп сывлăхлă та тĕрĕс-тĕкел пулни. Эпĕ пысăк та туслă çемьере пурăнатăп.

Хамăн пиччепе аппана, шăллăма юрататăп. Вĕсем маншăн чи лайăххисем, чи маттуррисем. Эпĕ вĕсемпе пушă вăхăта ирттерме кăмăллатăп. Пĕрле ӳкеретпĕр, тĕрлĕ интереслĕ вăйăсем шухăшласа кăларатпăр, кулăшла историсем каласа пама та юрататпăр. Анекдочĕсем вара мĕнле интереслĕ-ĕ!

Эпĕ Максим пиччепе Александра аппаран тĕслĕх илетĕп. Вĕсем студентсем. Кашниех хăйне килĕштерекен профессине алла илме ĕмĕтленет. Пиччепе аппа тăрăшуллă. Вĕсем мана вĕренӳре хавхалантараççĕ. Эпĕ те вĕсем пекех тăрăшатăп. Пичче спортпа туслă. Александра вăтам шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухнă. Институтра та пысăк стипенди илнĕ.

Ярослав шăллăмпа эпир яланах пĕрле. Иксĕмĕр вара шахматла, шашкăлла выляма кăмăллатпăр. Аттепе аннене кил хуçалăхĕнчи ĕçсене тума пулăшатпăр.

Юрататăп хамăн çемьене. Мăнаçланатăп атте-аннепе. Манăн атте нумай çул шалти ĕçсен пайĕнче ĕçленĕ. Питĕ тӳрĕ чунлă çын. Аллисем те унăн ылтăн. Темтепĕр ăсталама пĕлет. Пире шăллăмпа ярăнма чуччу туса пачĕ. Çурт купалама та маçтăр.

Анне те маттур. Вăл педагог, 2-мĕш вăтам шкулта ĕçлет. Ăна Ольга Николаевна тесе чĕнеççĕ. Ачасене тĕрлĕ пултарулăх конкурсĕсене хутшăнтарать. Вĕсем анне ертсе пынипе пĕрмаях малти вырăнсене йышăнаççĕ. Çапла вăл питĕ пултаруллă вĕрентекен. Вăл юрă-ташăсăр пурăнаймасть. Баянпа ăста калать. Тата анне тĕрлĕ капăрлăх хатĕрлеме те маттур. Хăçан çывăрма ĕлкĕрет-ши? Апатне те тутлă пĕçерет.

Пĕтĕм кил-йыш пухăнсан пурте пĕрле чăваш юррисене шăрантаратпăр.

**Константин КОСАРЕВ**